# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

74 (7499) № * Шăмат кун, 2007 çулхи сентябрĕн (авăн) 8-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


**Туса илнине çухатас мар**

## "Иккĕмĕш çăкăр" пуссинче

Кĕр кунĕсем çу вăхăтне хыçарах та хыçарах хăвараççĕ. Кĕçех сарă çулçăсем вĕçме пуçлĕç те Пукрав кунĕ те вара ытла аякра пулмĕ. Çакна тĕпе хурса çĕр ĕçченĕ тимлет те тимлет. Пĕрисем вырма ĕçĕсене вĕçлеççĕ, иккĕмĕшсем "икĕмĕш çăкăр" пуссинче тăрăшаççĕ, виççĕмĕшсем вара кĕрхи культурăсем акнă, çавна валли çĕр хатĕрленĕ çĕрте ĕçлеççĕ. Чăн та кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ. Чи кирли вара паянхи ĕçе ырана ан хăвар тесе çирĕплетет ваттисен сăмахĕ те.



Ку енĕпе çӳл тӳпери хĕвелĕ те чунтанах пулăшнăн туйăнать. Хăш-пĕр хуçалăхра вара ыран та ĕлкĕрĕпĕр-ха тени куçкĕретех. Каярах акатăн – каярах шăтать, вырма, пухма ĕçĕн те хӳри вăрăма каять. Çак пулăмсене вара Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра вăй хуракансем çирĕппĕнех сивлеççĕ. Аса илер-ха, кашни яваплă ĕçрех вĕсем малтисен ретĕнче пулчĕç.

Сентябрĕн малтанхи вунă кунлăхĕ çĕр улми çине тухмалли тапхăр шутланать. Çак ĕç вара вырма ĕçĕсем вĕçленнипе тачă çыхăннă. Паллă ĕнтĕ, вăхăтра пухса илеймесен, самантрах çакă çухатăва çаврăнма пултарать.

Паянхи кун тĕлне районта ултă хуçалăх çĕр улми пухас ĕçре тăрăшать. Ăна 123 гектар çинчен пухса кĕртме ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ е çакă 16 процентпа танлашать. Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра вара çак ĕçе 70 гектар çинче пурнăçламалла. Паянхи кун тĕлне 26 гектар



çинчен "иккĕмĕш çăкăра" пухса кĕртнĕ е çакă 37 процентпа танлашать. 260 тонна çĕр улмие пӳлмесене хывма ĕлкĕрнĕ. Пуçтарса илмелли лаптăк пысăк е пĕчĕк пулни те тĕп вырăнта мар. Çухатусемсĕр пуçтарса илесси вара чи кирли.

Вăрттăнлăх мар ĕнтĕ, чылай хуçалăхра çĕр улми пуçтарас ĕçе шкул ачисене явăçтараççĕ. Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра та шкул коллективĕсен вăйĕ пысăк тĕкĕ пулса тăрать. Икĕ енлĕ килĕшӳ вара хуçалăхпа шкулсемшĕн те питĕ меллĕ шутланать.

Хуçалăх ертӳçи те тăтăшах çĕр улми пуссинчи ĕç-пуçпа интересленсех тăрать. "Кĕрхи ĕç кирек камшăн та чи яваплă самант. Çавăнпа та хамăра пулăшма тухнă шкул ачисене, учительсене пысăк тав сăмахĕ калас килет", – терĕ вăл.

Сăмах май палăртар, Мускав хулинчи "Çĕр улми. Раççей – 2007" Пĕтĕм тĕнчери конгреса пирĕн районти виçĕ хуçалăх ертӳçи кайса килме тивĕç пулчĕ. Вĕсен шутĕнче çӳлерех асăннă хуçалăх ертӳçи Игорь Васильевич Николаев та пулчĕ. Ĕçлĕ тĕл пулура пысăк пахалăхлă тата пысăк тухăçлă çĕр улми туса илес, упрас енĕпе çĕнĕ технологисемпе, ку енĕпе çыхăннă ытти программăсемпе паллашрĕç. Апла пулсан ĕçлĕ çул çӳрев усăллă пуласса, хуçалăхра туса илекен çĕр улми тухăçĕ çине ырă витĕм кӳрессе шанас килет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: çĕр улми пуçтарас ĕçре пурте маттур; тухăç иртнĕ çулхинчен япăх мар.**

**Л. МИХАЙЛОВА сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**Райадминистрацире**

## Ĕçри хастарлăхшăн

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ, халăх вĕрентĕвĕн ĕçченĕсен профсоюзĕн районти организацийĕн канашĕ, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн администрацийĕ, Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх муниципаллă унитарлă предприятийĕ, ИП «Никита», район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн августăн 27-мĕшĕнчи 382 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлама йышăннă:

1. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас ĕçре тунă çитĕнӳсемшĕн:

– **Эльвира Анатольевна ВАСИЛЬЕВАНА**, Кашмаш шкулĕн биологипе хими учительне;

– **Галина Александровна МАЛЯСОВАНА**, «Путене» ача сачĕн музыка ертӳçине.

2. Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçе хастар хутшăннăшăн – **Алевтина Никифоровна ЛАПТЕВАНА**, «РГС-Поволжье» – Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕ» чикĕллĕ яваплăхлă общество филиалĕн Муркашри страхлакан пайĕн страховани агентне.

3. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхра нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçе хастар хутшăннăшăн – **Владимир Валерианович ПЕТРОВСКИЕ**, Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх муниципаллă унитарлă предприятийĕн тĕп инженерне.

4. Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçе хастар хутшăннăшăн:

– **Алевтина Петровна ХЛАШЕВАНА**, ИП «Никита» кассирне;

– **Решит Халиуллович ЧЕБЕНОВА**, «Чувашсетьгаз» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн директорне.

5. Вĕрентӳ ĕçĕнче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн тата обществăлла ĕçе хастар хутшăннăшăн – **Юрий Кузьмич АТЛАСКИНА**, педагогика ĕçĕн ветеранне.

**Раççейре**

## Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ - декабрĕн 2-мĕшĕнче

РФ Президенчĕ В.В. Путин "Раççей Федерацийĕн Федераллă Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен" 51 № Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн çĕнĕ Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавне кăçалхи декабрĕн 2-мĕшĕнче ирттересси çинчен указ кăларнă. Указ çине декабрĕн 2-мĕшĕнче алă пуснă.

Çак указ "Российская газета" хаçатра сентябрĕн 5-мĕшĕнче пичетленчĕ, çав кунран вăя кĕчĕ.

**Черетсĕр 20-мĕш лару**

## Ыйтусем пурте пĕлтерĕшлĕ

Депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 20-мĕш ларăвĕ район администрацийĕн ларусен залĕнче кăçалхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче ĕçлерĕ.

Ларура пăхса тухма кун йĕркине çак ыйтусене кĕртрĕç:

1. Пĕр мандатлă 1-мĕш номерлĕ Октябрьски тата пĕр мандатлă 7-мĕш номерлĕ Мăн Тутаркас суйлав округĕсемпе депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутачĕсен хушма суйлавне ирттересси çинчен.

2. Чăваш Республикинчи Тĕп суйлав комиссине Муркаш районĕн суйлав комиссийĕн полномочийĕсене Муркаш территори суйлав комиссийĕ çине хума ыйтасси çинчен.

3. «Муркаш районĕнчи ял хуçалăх аталанăвĕн тата ял хуçалăх продукцийĕн, чĕр таварпа апат-çимĕçĕн рынокне йĕркелессин 2008 – 2012 çулсенчи Программи» çинчен.

4. Депутатсен районти Пухăвĕн 2005 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕнчи С-4/5 № «Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин налуксемпе тӳлевсем çинчен калакан законодательствипе вырăнти самоуправлени органĕсем çине хунă налук йĕркелĕвĕн ыйтăвĕсем çинчен» положение çирĕплетесси çинчен».

5. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕнчи «Единая Россия» партин депутатсен ушкăнĕ çинчен калакан положение çĕнĕ редакципе çирĕплетесси çинчен.

6. Наградăсем илме тăратасси çинчен.

Пĕрремĕшпе иккĕмĕш ыйтусемпе район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Л.Ю. Тарасова, виççĕмĕш ыйтупа район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов, тăваттăмĕш ыйтупа район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ Р.И. Ананьева тухса калаçрĕç. Депутатсем сӳтсе явса депутатсен Муркаш район Пухăвĕнчи «Единая Россия» партин депутатсен ушкăнĕ çинчен калакан положение çĕнĕ редакципе çирĕплетрĕç, патшалăх наградисем илме тăратнисене пăхса тухрĕç.

Юлашкинчен çавна каласа хăвармалла. Лару ĕçне хуçалăх ертӳçисенчен чылайăшĕ хутшăнма кăмăл тумарĕ. Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсенчен 10-мĕш округпа Ю.В. Данилов, 15-мĕш округпа Н.А. Кожевников, 20-мĕш округпа В.П. Морозов паллă мар сăлтавсемпе ларăва пыманни вара вĕсене пушшех те чыс тумасть.

**Хамăр инф.**

### Вулакансене пĕлме

## Район хаçатне çĕнĕ хакпа çырăнтараççĕ

**Райхаçата çырăнмалли хак сентябрĕн 1-мĕшĕнчен малтан пĕлтернĕ пек 27 процент мар, 15 процент чухлĕ çеç хакланчĕ.**

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнмалли çĕнĕ хак – 169 тенкĕ те 62 пус.**

**Çитес çул та пĕрле пулар.**

**РАЙХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ.**

**Ял хуçалăх ыйтăвĕсемпе**

## Лăпланма вăхăт çитмен

***Урамра кĕр кунĕсем ĕнтĕ. Ял ĕçченне лăш! сывласа яма иртерех-ха. Яваплăха татах та ӳстерме тивет çак вăхăтра. Çитĕнтернĕ ял хуçалăх культурисене тăкаксăр пухса кĕртнине мĕн çиттĕр? Çитес çулхи тыр-пул никĕсĕшĕн те паянах тимлемелле. Мĕнле шайра паян вырăнсенче ял хуçалăх ĕçĕсем? Ял хуçалăхĕнчи паянхи лару-тăрупа паллаштарма ыйтрăм та район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕнчен А.Н. ИВАНОВРАН.***

**– Альберт Николаевич, калаçăва вырмаран пуçласан вырăнлăрах пулĕ.**

– Тĕпрен илсен, районта вырма вĕçленнĕ тесен те юрать. К. Иванов ячĕллĕ, "Лидер", "Волга" хуçалăхсенче тата Михайловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче çеç пухса кĕртмен пысăк мар лаптăксем юлнă. Кăçал çанталăк хăйне евĕрлĕ килчĕ. Çурхи культурăсене акнă хыççăн чылай хушă çумăр пулмарĕ. Каярахпа çумăр пулнă хыççăн шăтса тухнă лаптăксенче вара çурхи тырă халь çеç пиççе пырать. Паян шăпах çав вырăнсенче çурхи культурăсене пухса кĕртмелли юлнă.

Çанталăк условийĕсем тырă тухăçĕ çине те витĕм кӳмерĕç мар. Кĕрхи культурăсен тухăçĕ пысăк пулчĕ пулин те, çурхи культурăсем вăхăтра аталанса юлса ӳсеймерĕç, тухăç вĕсен пысăк пулаймарĕ. Çавăнпа та тухăç вăтамран районĕпе 18–19 центнерпа танлашать. Ильич яч. хис., Чкалов ячĕллĕ хуçалăхсенче вăл 30 центнертан та иртет. "Герой", "Оринино", Суворов ячĕллĕ хуçалăхсенче кашни гектартан 20 центнер ытла туса илчĕç тыр-пула. Пĕтĕмпе 19 пин тоннăна яхăн тырă çапса тĕшĕленĕ.

**– Кĕр аки те пуçланнă районта. Мĕнле пыраççĕ паян ĕçсем ку тĕлĕшпе?**

Кăçал та кĕрхи культурăсем ăнса пулчĕç. Çакă пире кĕр тыррисене ытларах акса хăварни хамăршăнах лайăххи пирки калать. Иртнĕ çул вĕсене 3 пин гектара яхăн лаптăк çинче акса хăварнă пулсан, кăçал тĕллевсем пысăк. Кĕрхи культурăсем 5500 гектар çинче акма палăртнă. Хальлĕхе ăна 4 пин гектара яхăн лаптăк çинче акнă. Уйрăмах "Ударник" (700 гектар), Суворов яч. хис. (630 гектар), Ильич яч. хис.,Чкалов яч. хис., "Свобода"(350-шар гектар), Е.Андреев яч. хис., "Оринино"(220–270 гектар) хуçалăхсем пысăк лаптăксем çинче акса хăварчĕç кĕр тыррисене.

**(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).**

**Эсир ыйтнипе**

## Пособисем пирки тепĕр хут

Çемьере ача пур гражданесене уйăхсерен пособи 1995 çулхи майăн 19-мĕшĕнче йышăннă «Ача пур гражданесене патшалăх пособийĕ парасси çинчен» 81-ФЗ номерлĕ Федераллă саккунпа тата Чăваш Республикин 2004 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕнче йышăннă «Ача пур гражданесене патшалăх пособийĕ парасси çинчен» 46 номерлĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн парса тăраççĕ. Чăваш Республикин саккунне 2005 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕнче 17 номерлĕ, 2005 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче 55 номерлĕ, 2005 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнче 64 номерлĕ, 2006 çулхи июнĕн 2-мĕшĕнче 27 номерлĕ, 2006 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнче 69 номерлĕ, 2007 çулхи мартăн 29-мĕшĕнче 4 номерлĕ, 2007 çулхи июнĕн 9-мĕшĕнче 36 номерлĕ саккунсемпе улшăнусем кĕртнĕ.

2007 çулхи майăн 11-мĕшĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ «Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2004 çулхи декабрĕн 23-мĕшĕнчи 337 номерлĕ йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен» 109 номерлĕ йышăну турĕ. Унпа килĕшӳллĕн ача пур çемьесене пособи тӳлеме тытăнассин тата тӳлесе тăрассин йĕркине улшăнусем кĕртнĕ.

Çак йышăну ача пособине илсе тăракансен йышне ӳстерет: шута илме кирлĕ сăлтавпа граждансем ĕçлемеççĕ пулсан та 1-мĕш приложенипе килĕшӳллĕн справка тăратмасăрах вĕсене пособи тӳлеме пултараççĕ. Ăнлантару хучĕ тата вырăнти самоуправлени е патшалăх влаç органĕнчен вĕсем мĕншĕн ĕçлеменнине çирĕплетекен документ кăна кирлĕ пулать. Шута илме кирлĕ сăлтавсем шутне ĕç вырăнĕ çук пирки ĕçе вырнаçма пултарайманни, инвалид ачана, инвалида тухнă çемье членне, нумай ачаллă çемьере 14 çула çитмен ачасене пăхса пурăнни кĕреççĕ.

2007 çулхи июнĕн 9-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров «Чăваш Республикин «Ача пур гражданесене патшалăх пособийĕ парасси çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» 36 номерлĕ саккун çине алă пуснă. Унпа килĕшӳллĕн Чăваш Республикинче ачасемшĕн пособи парассине палăртнă чух çемьен кашни членĕ пуçне тивекен тупăш виçине ӳстернĕ.

Çак саккунпа 2007 çулхи майăн 1-мĕшĕнчен тытăнса çемьен кашни членĕ пуçне уйăхри вăтам тупăш пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçен 150 процентĕ таран пулсан ачасемшĕн уйăхсерен пособи тӳлеççĕ.

**С. ЛЮБИМОВА,**
**Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин Муркаш районĕнчи халăха социаллă хӳтлĕх паракан пайĕн тĕп специалисчĕ.**